*Кăçалхи раштав уйăхĕнче Василий Иванович Давыдов-Анатри 80 çул тултарчĕ. Сав ятпа ăна чĕререн саламлатпăр, çирĕп сывлăх, пултарулăхра çĕнĕ çитĕнӳсем сунатпăр.*

**Васлей ДАВЫДОВ–АНАТРИ**

# «ЭП ЁÇЛЕРЁМ ÇАННА ТАВĂРСА...»



## ТĂВАН КĔТЕС

**Асран кайми тăван кĕтес,**
**Сана мĕнле парне сĕнес!**
**Эс чунăма уçса яран,**
**Мана телей, ыр кун сунан.**

**Умра Пăла сиксе вылять,**
**Сĕвенелле юхать, васкать.**
**Вăл тĕл пулать пиччĕшĕпе —**
**Раççей-анне çырмийĕпе.**

**Епле манан... Ав, леш малти**
**Хырай ёшни, Сăрнай кати.**
**Çулла пулсан, çара уран**
**Эпир унта мĕн чул чупман.**

**Мĕн çук ёлккен Çăкасарта!**
**Ватти-вĕтти каять унта.**
**Хура çырла, кĕтмел, палан, —**
**Чĕрес тулать çакки таран.**

**Çӳлтен-çӳле пӳне тăсса**
**Ӳсет хăмла явкаланса.**
**Сӳнми илем çут ирхине, —**
**Кĕтӳ тухать вăрман хĕрне.**

**Ик куç тулли ыраш пусси,**
**Унта кĕрлет машин сасси...**
**Асран кайми тăван кĕтес,**
**Сана мĕнле парне сĕнес! —**

**Хисеплесе, чунтан савса,**
**Парап сана юр юрласа.**
**Тăван кĕтес, кӳр аллуна,**
**Кĕтсе илсем ху ачуна!**

## УПРА ТĂВАН ЧĔЛХЕМĔРЕ

**Ан тиркесем чĕлхемĕре,**
**Ан хăй ăна начар теме, —**
**Унпа сана аннӳ ӳстернĕ,**
**Юрла-юрла хуллен сиктернĕ.**

**Савар, мухтар чĕлхемĕре,**
**Ăна усрар чыс-хисепре.**
**Унпа эпир ĕçе вĕреннĕ,**
**Çӳл тӳпене çити çĕкленнĕ.**

**Упрар тăван чĕлхемĕре —**
**Чун-чĕрери хĕлхемĕре.**
**Унпа эпир ялан çĕнтернĕ,**
**Çĕршыв ятне çӳле çĕкленĕ!**

## МАНĂН ЧУНĂМ ТАСА

**Эп ĕçлерĕм çанна тавăрса,**
**Çĕршыва чĕререн юратса.**
**Çавăнпа манăн чунăм таса.**

**Эп кĕтмерĕм хама мухтасса,**
**Çӳремерĕм элек пуçтарса.**
**Çавăнпа манăн чунăм таса.**

**Эп çынсен туслăхне аркатса**
**Çӳремерĕм сăмах çаптарса.**
**Çавăнпа манăн чунăм таса.**

## АННЕ ПИЛĔ

**«Ачам, çынна сума сусан,**
**Эс пархатар, хисеп куран».**
**Анне мана çапла ялан**
**Хуллен лăпкатчĕ çурăмран.**

**Аннен çак ăслă сăмахне**
**Асран ямастăп ĕмĕрне —**
**Хам ăсăма, чун хĕвелне**
**Йăлтах пиллетĕп çынсене.**

## ЧЕЧЕКСЕМ

**Çурт çумĕнче мĕн чул чечек:**
**Сап-саррисем, хĕп-хĕрлисем,**
**Кĕреннисем, кăваккисем...**
**Шевле вылять кашни çинче,**
**Эпир ӳстернĕ вĕсене —**
**Çут çăлтăр пек чечексене.**

## АТĂЛ ХĔРРИНЧЕ

**Йăлăм çийĕпе**
**Шурăмпуç килет.**
**Атăлваррипе**
**Пăрахут иртет.**

**Çăра шур тĕтре**
**Сирчĕ картине.**
**Çăлтăр — пĕлĕтре —**
**Çĕтрĕ хулленех.**

**Ыткăнчĕç хумсем**
**Ик çыран енне.**
**Шурă акăшсем**
**Анчĕç шыв çине.**

**Йышлăн пулăçсем**
**Кимĕсем çинче.**
**Куç тулли илем**
**Атăл хĕрринче.**